# Çутат, хĕвел, вăйлăрах!

*(Аслă ушкăнри ачасемпе ирттермелли ĕç)*

***Л.В. ЩУКИНА**, Муркашри 27-мĕш номерлĕ «Путене» ача сачĕн аслă категориллĕ воспитателĕ*

**Ĕç тĕллевĕ**: аслă ушкăнри ачасене çут çанталăк илемне курма, унпа киленме хăнăхтарса пырасси; чĕлхе сăнарлăхне литература произведенийĕсем урлă туйма-курма вĕрентесси; çут çанталăк илемне тĕрлĕрен сăнлама май пуррине кăтартасси; тăван чĕлхене юратма вĕрентесси; хĕвел символне чăваш тĕрринче палăртасси.

**Кирлĕ хатĕрсем**: икĕ енлĕ хĕвел (хурлăхлă тата савăнăçлă), çумăр пĕлĕчĕ, çанталăка сăнлакан карттă-схемăсем, экран, чăваш тĕрринчи хĕвел паллисем, тĕрлĕ тĕслĕ хăйăр, çилĕм (клей).

## Ĕ ç  й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн пата ăшă салам çитрĕ. Саламĕ камран пулнине ăнкарма ун çинчен çырнă сăвă тупсăмне пĕлмелле.

Ирпе ирех вăранать –

Çӳл тӳпене хăпарать.

Çĕр çине савса пăхать,

Хĕпĕртесе йăл кулать.

Ачасем, мĕн-ши ку?

А ч а с е м. Хĕвел!

Алăкран хăна – пĕлĕт хыçĕнчен курăнакан хурлăхлă  Х ĕ в е л  кĕрет.

Х ĕ в е л. Ырă кун пултăр, ачасем!

А ч а с е м. Хĕвел, ырă кун пултăр!

В о с п и т а т е л ь. Хĕвелĕм, мĕншĕн эсĕ савăнăçлă мар?

Х ĕ в е л. Мана çумăр пĕлĕчĕсем картлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Хĕвеле пулăшма пултаратпăр-ши эпир? Ачасем, эсир мĕнле шухăшлатăр? (*Ачасен хуравĕсем.*) Маттур, ачасем! Атьăр тарăннăн сывласа илер те пурте пĕрле вĕрсе пĕлĕтсене сирсе ярар.

Ачасем воспитатель каланă пек тăваççĕ.

Х ĕ в е л (*савăнăçлă енĕпе çаврăнса*). Тавтапуç, юратнă ачасем!

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр-ха аларан-алă тытăнса пирĕн хăнан ырă енĕсене аса илер. Хĕвел мĕн тăвать? (*Савăнать, йăл кулать, ăшăтать, ирех тăрать, пурне те вăрататать, çутатать, юр ирĕлтерет…*) Маттур, ачасем! Пĕлетĕр-и эсир, ĕлĕк-авал хĕвеле вăрласшăн пулнă. Сире çав халапа вуласа парам-и? (*Ачасен хуравĕсем.*) Апла, вырнаçса ларăр та тимлĕ итлĕр.

Ачасем тенкелсем çине лараççĕ. Лăпкă кĕвĕ янăрать. Воспитатель вулать.

***«Чаваш паттăрĕсем хĕвеле епле çăлнă» халап.***

Вăрăм хĕл вăхăтĕнче хĕвел çине пĕрмай усал чунсем тапăннă. Ăна тӳперен туртса антарасшăн пулнă. Çав усалсене Вупăр карчăк хĕтĕртсе тăнă. Хĕвел тӳпере питĕ сайра курăна пуçланă. Чăваш паттăрĕсем ăна тыткăнран çăлма шут тытнă: ваттисенчен пил илнĕ те тухăçалла çул тытнă. Çичĕ кун та çичĕ каç паттăрсем Вупăр тарçисемпе çапăçнă. Юлашкинчен вĕсене çĕнтернĕ. Вупăр карчăк хăйне пулăшакансемпе çĕр тĕпне тарса пытаннă.

Паттăрсем хĕвеле асăрханса çĕкленĕ те тĕрĕллĕ сурпан çине хунă. Кайран вĕсем тухăçри чи çӳллĕ ту çине, ту çинчи чи çӳллĕ йывăç çине улăхнă, хĕвеле хуллен тӳпе çумне çирĕплетсе хунă. Çак вăхăтра хĕвел амăшĕ чупса пынă, ывăлне алла илнĕ, кăкăрĕпе ĕмĕртнĕ. Хĕвел часах йăлтăртатма, çиçме пуçланă, амăш сĕчĕпе унăн вăй хушăннă. Вăл тӳпе тăрăх ташла-ташла хавассăн чупса кайнă.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сире халап килĕшрĕ-и? (*Ачасен хуравĕсем.*) Паян урамра мĕнле çанталăк-ши? (*Ачасен хуравĕсем.*) Халĕ çулталăкăн хăш вăхăчĕ? (*Ачасен хуравĕсем.*) Тĕрĕс, халĕ – çуркунне! Атьăр-ха çуркунне паллисене каласа тухар. (*Хĕвел ăшăтса пăхать. Юр ирĕлет. Кайăксем вĕçсе килеççĕ...*) Маттур, ачасем! Халĕ калăр-ха, çурхи хĕвел çуллахи хĕвелтен мĕнпе уйрăлса тăрать-ши?

А ч а с е м. Çуркунне хĕвел ăшă, çулла – вĕри.

В о с п и т а т е л ь. Паян пире ăшă хĕвел выляма чĕнет. Вăйă ячĕ – «Хĕвел». Айтăр-ха малтан шут сăвви каласа ертсе пыракана суйлар. Вăл хĕвел пулать. Ыттисем вăйă карти тăватпăр.

Хĕвеле ертсе пыракана параççĕ. Вылякансем карталанса ун тавра сăвăласа çаврăнаççĕ.

А ч а с е м.

Çутат, хĕвел, вăйлăрах –

Çулла пулĕ шăрăхрах,

Хĕл кунĕсем ăшăрах,

Çурхи кунсем çутăрах.

Ачасем Хĕвел патне пыраççĕ. Лешĕ: «Вĕри!» – тет те вĕсене хăвалама пуçлать. Темиçе хут выляççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, хĕвел çанталăк мĕнле пулассине те систерет. Çав паллăсене аса илер-ха!

Ачасем сĕтел тавра тăраççĕ, ун çинче выртакан карттă-схемăсемпе паллашаççĕ. Воспитатель çанталăкпа çыхăннă хĕвел паллисене калать. Ачасем çав сăнавсене карттă-схемăсенче тупаççĕ.

***Сăнавсемпе ĕненӳсем.***

1. Хĕвел йĕри-тавра çаврака курăнсан çулла çумăр пуласса, хĕлле – çил-тăмана.
2. Хĕвел аннă чухне пĕлĕт хĕрелсен тепĕр кун е çумăр, е çил пуласса.
3. Ирхине хĕвел пĕлĕт хыçне пытансан – çумăра.
4. Лăпкă та шăрăх кун пулсан тепĕр кун аслатиллĕ çумăра е пăр çăвасса.

Воспитатель ачасене сĕтел хушшине ларма сĕнет. «Чаваш паттăрĕсем хĕвеле епле çăлнă» халапа аса илсе вĕсем сурпан çинчи чăваш тĕррисене пăхаççĕ. Экран çинче – «Чăваш хĕвелĕ тĕрĕре» презентаци, сĕтелсем çинче – çилĕм тата тĕрлĕ тĕслĕ хăйăр.

В о с п и т а т е л ь. Чăвашсем хĕвеле хисеплесе юрă хывнă, сăвă çырнă, ӳкерчĕксем тунă. Хĕвеле юратса хĕрсем тĕрĕ тĕрленĕ, ăна кашни хăйне евĕр эрешленĕ. Ачасем, паян хĕвел сире хăйĕн пайăркисене парнелет.

Воспитатель ачасене чăваш тĕрринчи хĕвел символĕсене валеçет. Ачасем «Хăйăр технологийĕ» мелпе (авторĕ – Мариэлла Зейц) хĕвеле илемлетме пуçлаççĕ. Ĕçе вĕçлесен хĕвел ачасене мухтать, урама выляма чĕнет.